# Вилĕме çĕнтернĕ çын

*Очерк*



Январь уйăхĕн 12-мĕшĕнче Алексей Николаевич Кожевников 60 çул тултарчĕ. Вăл Муркаш районĕнчи Хуракасси Выçăлкки ялĕнче çуралнă. 1965 çулта Муркаш шкулне пĕтернĕ хыççăн Чăваш ял хуçалăх институтĕнче вĕреннĕ. 1971-72 çулсенче "Герой" колхозра, унтан ĕмĕрĕпе "Свобода" хуçалăхра агрономра ĕçленĕ. 1985 çулта "Чăваш АССР тава тивĕçлĕ агрономĕ" ята тивĕçнĕ.

"Ун çинче пĕтĕм колхоз тытăнса тăрать", - шӳтлетчĕç ун чухне ял-йышра. "Свобода" колхоз яланах Муркаш районĕнче малта пыракан хуçалăх пулнă. Колхозниксем илекен çултан-çул ӳсекен тупăш пĕлĕт çинчен татăлса анман ĕнтĕ. Ял çыннисен пурнăçĕ палăрмаллах лайăхланнин сăлтавĕсен пĕри вăл – А.Н. Кожевников агроном ĕçĕ. Унăн ĕç-хĕлне паян та ял çыннисем ырăпа асăнса пурăнаççĕ...

Тăван çĕр... Ку тăрăхра тӳрем вырăнсем çукпа пĕрех. Йĕритавра çырма-çатраллă, тайлăмлă-хысаклă уйсем, шурă кĕллĕ çерем тăпри. Алексей Николаевич колхоза киличчен гектар тухăçĕ вунă центнертан иртмен. Çырмасемпе типĕ варсем çывăхĕнчен, тайлăм вырăнсенчен çĕршер тонна пулăхлă тăпра шыв-шур вăхăтĕнче юхса кайнă. Ун пек çĕрте тислĕк кăларни те усă парайман. Хуçалăхри ĕçсене тĕпрен улăштарас тесе сахал мар çывăрмасăр шухăшланă çамрăк агроном.

Çĕр – колхозăн тĕп пуянлăхĕ. Çакна кашни колхозник чунчĕрипе ăнланнă. Çавăнпа ĕнтĕ «Свобода» колхозри çырмаварлă вырăнсенче çĕр хатĕрленĕ чухне яланах тимлĕ ĕçлеме тивнĕ, эрозие хирĕç кĕрешмелли агротехника меслечĕсемпе анлăн усă курнă. Кунти пĕтĕм çĕрсен 70 процентне эрозипе сиенленет. Пуриншĕн те паллă: çут çанталăк хăй тĕллĕн тăпра пулăхне лайăхлатас çук. Çĕр ĕçне кирлĕ пек туса пымасан унран нимĕн те илеймĕн. Çавăнпа та çамрăк агроном умĕнче тăракан чи пысăк задача çĕр пулăхне лайăхлатасси пулса тăнă. Ку тĕллевпе ятарласа халех тата малашнехи çулсенче мĕн-мĕн тумалли ĕçсен мероприятине туса хатĕрлерĕ. Çырмасенче вăрман тăрăхĕсем лартса ӳстерчĕ. Ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсемпе, республикăри малта пыракан хуçалăхсен опычĕпе усă курса, эрозипе кĕрешме ятарласа пусă çаврăнăшĕ турĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, хуçалăхри мĕн пур çитĕнӳсене çĕрпе тĕрĕс усă курассине лайăхлатса пынипе тунă.

Ахаль кĕресшĕн мар тырă пӳлмене, ахаль хурăнасшăн мар утă капана.

Çĕр çинчи пуянлăх шутлаттарать те, тарлаттарать те хресчене. Утă-улăм, сенаж ытларах пултăр тесе мĕн чухлĕ вăй хумалла тата? Ахальтен ăçтан çулран-çул пысăк тухăç илме май пултăр?

Колхозăн тĕп агрономне ларсан та Алексей Николаевичăн канма вăхăчĕ пулман: колхозра çĕр ĕçĕн науки вĕрентнĕ пек никĕсленĕ системине туса хурасси, удобренисемпе усă курасси, çĕнĕ сортсене хута ярасси, çум курăксемпе, хурт-кăпшанкăпа, ӳсен-тăрансен чирчĕрĕсемпе кĕрешесси, пусă çаврăнăшне тĕрĕс йĕркелесси, çĕре комплекслă çĕнетесси, паха вăрлăх туса илессине лайăхлатасси, агротехника ыйтăвĕсем тата çĕр тĕрлĕ ыйту.

Уй урлă çĕршер-пиншер çухрăм утса тухса кашни ана çинчи кашни пĕчĕк çĕр муклашкине палланă вăл. Пур ĕçченпе пĕр чĕлхе тупма пĕлнĕ. Халиччен унăн çăварĕнчен ыттисене мухтани çеç илтĕнет. Паян кун та Алексей Николаевич ĕçчен колхозниксене пĕр вĕçĕм асăнать. Акакансене те, вăрлăх имçамланă çынсене те, пĕр-пĕр уйра çирĕм е вăтăр çул каялла ĕçленĕ комбайнерсене те аса илет. Хавхаланса, мăнаçланса калаçать.

– Тĕлĕнмелле пек те, улăм хатĕрлеме Тюмень облаçне каяттăмăр. Улăм тĕш-тырă хакĕпе танлашма пуçларĕ ун чухне. Çулла тухман тар хĕлле тухать, тенĕ пекех пулса тухатчĕ мар-и? Колхозра «ĕнесĕр хĕрарăмăн ĕç çук тенĕ пек» пурăнаймастăн. Сурăхĕ картиш тулли макăрса тăрать, ĕне хӳрипеле çапкалашать, сыснисем сăмсисемпе вите урайне тăпăлтараççĕ... Çапла вара пĕррехинче правлени членĕсем пĕрле пухăнтăмăр та, кивĕлле пурăннипе çитет, терĕмĕр. Вара колхозра çуллен çулталăк çурăлăх утă-улăм хатĕрлесе хăвараттăмăр. (Сăмах май, халĕ хăш-пĕрисем утă-улăма çунтарма та совеç çитереççĕ. Утти-улăмĕ ытлашши пулсан ĕмĕрне нуштапа пурăннă ватăсене киле илсе кĕме ирĕк памалла мар-ши?) Выльăх апачĕ – чи кирли. Кунта хăйне евĕр шайлашу: выльăх-чĕрлĕхĕ те вите тулли пулать, аш-пăшне те, сĕтне те ытларах илетпĕр, тислĕкĕ те уй-хире нумайрах тухать, апла пулсан, тухăç та пысăкрах – колхоз та пуянрах.

Шӳтлеме те ăста Алексей Николаевич. Сăмахĕ кулăшлăрах пулса тухсан, малтан хăй кулса ярать. Ырă кăмăллă уçă çын.

– «Цивильский» сортлă урпана çуллен 300 гектар çинче акса тăваттăмăрччĕ. Гектар тухăçĕ 35-40 центнер. «Восход-2» ыраш та тухăçĕпе савăнтаратчĕ. Унăн лаптăкĕ 410 гектарччĕ. Çак сорт гектартан 35 центнертан кая тухман. Ĕçлемелле, тăрăшса ĕçлемелле. Кӳлĕнтĕн пулсан, туртасах пулать...

Колхозăн уй-хирĕсене курса чун савăнатчĕ. Вĕçĕ-хĕррисĕр ем-ешĕл инçет. Курăк пуссинче симĕс хум вылять. Çакă мар-и колхозăн чи хаклă пуянлăхĕ?

Çапла ĕçлеттĕмĕр, тăрăшаттăмăр...

Çапла ĕçленĕ, тăрăшнă «Свобода» колхозăн тĕп агрономĕ Алексей Николаевич Кожевников. Ун çинчен хаçат-журналта çырнă. Ун патне опыт пухма Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килнĕ. Унăн ячĕ таврара кĕрленĕ.

Кайран – шăплăх...

Ăçта, мĕн пулнă унпа?

Унăн шăпи А.Н. Островский писателĕн пек пулса тухрĕ. Алексей Николаевича хурушă чир çапса хуçать. Вăл Павка Корчагин пекех пĕр хускалми темиçе çулталăк выртать. Уйăхĕ-уйăхĕпе шăна ларсан та хăваласа яма пĕр пӳрни те хускалман. Çулталăкĕ-çулталăкĕпе пĕр сăмах калайман. Юнашар тăракан тăванĕсене паллаtotман. Апат çиме, тула кайма хевти çитмен. Пурнăç пĕтнĕн туйăннă...

Анчах юратнă мăшăрĕ Нина Михайловна, виçĕ ывăлĕпе пĕр хĕрĕ тата ватă ашшĕ çывăх çынна пăрахман, чĕрĕлессе шаннă. Пиччĕшĕсемпе шăллĕсем, тăванĕсем пулăшса тăнă. Кам шутланă пуль миçе çĕр çывăрмасăр унăн кĕлетки умĕнче хурал ларнине? Кам ас тăвать-ши хуйхăпа тулнă кунсене? Хăйсене пырса тивменнисем кунта сăмах мĕн çинчен пынине те ăнланмаççĕ пуль. Çын çинчи çăмăл çав.

Кожевниковсем çулталăкĕ-çулталăкĕпе больницăсем тăрăх çӳреççĕ. Вилмех тесе киле янă ывăлне тăхăрвунна çитнĕ ашшĕ сад пахчине йăтса тухса тĕрлĕрен курăксемпе юсама тăрăшать. Ашшĕне ура çине тăратас тесех хĕрĕпе ывăлĕ тухтăра вĕренсе тухаççĕ. Пĕлĕвĕсемпе çывăх çынна пулăшма тăрăшаççĕ. Çапах та Нина Михайловна пулмасан нимĕн те пулмастчĕ. Ылтăн чĕреллĕ çав Нина Михайловна!

Мĕнех, тăванĕсем пулăшнипе вунă çын валли çитмелли нушана чăтса ирттерет Алексей Николаевич. Ураланать вăл. Уçăлать! Тăна кĕрет! Калаçма пуçлать!

Халĕ каллех килти хуçалăхра кăштăртатать. Выльăх-чĕрлĕх çумĕнче кун ирттерет, пахчара хурт-хăмăрпа чунне кантарать.

Ачисемпе, мăнукĕсемпе савăнать вăл. Мухтанма та майĕ пур. Аслă ывăлĕ Николай Алексеевич сакăр çул Муркаш больницинче хирург-урологра ĕçленĕ хыççăн Шупашкарти БСМП-ра вăй хурать, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ. Эльвира Алексеевна хĕрĕ халĕ тухтăрта Çурçĕрте ĕçлет. Çирĕм пилĕк çулхи Юрий Алексеевича вара Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулма суйларĕç. Володя ывăлĕ те Кожевниковсен ăраттинче пурин пекех аслă пĕлӳ илет.

Акă, 60 çулхи юбилей те çитрĕ. Шăпа çине çилленмест Алексей Николаевич.

– Мĕн пулмалли çапах пулать. Пуçа усмалла мар. Ĕçлес пулать, тăрăшас пулать.

**Екатерина ЗАХАРОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: А.Н. Кожевников (сылтăмри) хăйĕн кинĕпе, ывăлĕпе тата мăшăрĕпе.**

## Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кунне пĕтĕмлетсе

# Лару-тăру туртăнма хистет

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**"Геройра"** асăннă отрасль ĕçне кашни кварталтах пĕтĕмлетеççĕ. Хуçалăхăн иртнĕ çулхи кăтартăвĕсем кунта выльăх-чĕрлĕх отраслĕ япăх мар аталаннине кăтартса параççĕ. Аша та, сĕте те малтанхи çулхинчен ытларах туса илнĕ. Кашни ĕнерен вăтамран 4317 килограмм сĕт сунă. Мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 608, сыснасен 423 грампа танлашать. Ĕç укçине те кунта вăхăтрах тӳлеççĕ. Выльăх апатне çителĕклĕ янтăланă. Йĕркеллĕ лару-тăрăва вара Шурчари ĕне ферминчи санитари тĕлĕшĕнчи лару-тăру пăсать.

**Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх** ĕçченĕсем те выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе мăнаçланма пултараççĕ. Виçĕмçулхинчен кăтартусем палăрмаллах пысăкрах. Ферма ĕçченĕсене хавхаланса ĕçлеме ăмăрту йĕркелени те пулăшать. Ĕç укçине те вăхăтрах тӳлеççĕ. Выльăх апачĕ енĕпе те йывăрлăхсем çук. Апла пулсассăн витесемпе йăла пӳлĕмĕсене тирпейлемесĕр алă усма кунта сăлтав çук. Çавăнпах пулĕ çитменлĕхсем курăнмаççĕ.

**Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра** выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене пĕлтĕр виçĕмçулхинчен палăрмаллах ытларах туса илни хуçалăхра ертӳçĕпе специалистсем, ферма ĕçченĕсем пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлеме тăрăшни пирки калать. Ĕç укçине вăхăтра параççĕ. Выльăх апачĕн рационĕ те чухăн мар. Тирпейлĕх çине ытларах пăхсан вара ытлашши пулмĕ.

**"Орининăра"** та выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи лару-тăру япăх мар. Фермăсенче тирпейлĕхпе йĕркелĕх, ĕç укçин парăмĕ çук. Выльăх апатне çителĕклĕ хатĕрленĕ. Сĕте иртнĕ çул кашни ĕнерен 4120 килограмм сунă. Виçĕмçулхинчен кăшт сахалрах ку. Кăçал ку тĕлĕшпе малалла каясса шанас килет.

**Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра** пĕчĕккĕн пулин те малаллах талпăнма тăрăшаççĕ. Çакна иртнĕ çулхи кăтартусем те çирĕплетсе параççĕ. Сĕт туса илессипе вара вăл пĕчĕкленнĕ. Хуçалăхра ĕне сăвакан оператор, выльăх пăхакан, ветфельдшер çитменни те вырăнта йывăрлăхсем пурри пирки калать. Выльăх апачĕ çителĕклĕ теме йывăртарах.

**"Свободăра"** производство кăтартăвĕсем пысăк пулни хăех кунта ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшнине кăтартса парать. Анчах вĕсем виçĕмçулхинчен кăшт пĕчĕкленни паян ура çинче çирĕп тăракан хуçалăхсене те çăмăлах маррине кăтартса парать. Уйăхри вăтам ĕç укçи – 3500 тенкĕ, анчах ăна 3 уйăхшăн тӳлеймен-ха. Фермăсенчи йĕркелĕх пирки вара кунта ӳпкелешӳ çук. Выльăх апатне çителĕклĕ хатĕрленĕ. Хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем пĕр–пĕринпе ăмăртса ĕçлени тунă çитĕнӳсемпе лăпланмасăр малалла талпăннине кăтартса парать.

**Матвеевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче** 7ĕн ĕçлеççĕ. Слесарь кирлĕ кунта. Производствăра кирлĕ пур система та йĕркеллĕ ĕçлет. Пуша ларакан пӳлĕмсенче пахча çимĕç калчисене ӳстерме шухăшлаççĕ.

**К.Иванов ячĕллĕ хуçалăхра** ĕç укçин парăмĕ çук, анчах вăл пурăнмалли чи пĕчĕк минимумран сахал: 2170 тенкĕ. Кашни кĕçнерни кун санитари кунĕсем иртнĕрен кунта тирпейлĕ. Утă 110, силос 1055, улăм 18 тонна пур. Концентрат апрельччен çитет. Ферма ĕçченĕсене ĕç тумтирĕпе тивĕçтересси çине те пӳрне витĕр пăхмалла мар.

**"Передовикра"** та лару-тăру йĕркеллĕ теме çук. Выльăх-чĕрлĕх сферинче пурĕ 34ăн вăй хураççĕ. Çак йышăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ ĕç вырăнĕсенче çынсем çитменни те çакăн пиркиех калать. Хуçалăхра специалистсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем çитмеççĕ. Вăтам ĕç укçи 1850 тенкĕ пулнине шута илсен, çакăнтан тĕлĕнме те кирлех мар пулĕ.Выльăх апачĕ çителĕксĕрри, унăн пахалăхĕ лайăхах пулманни выьăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартма май памасть пулĕ. Концентрат вара кирлĕ чухлин 40 проценчĕ чухлĕ çеç.

**"Волга" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра** прозводство кăтартăвĕсем пĕчĕк мар (тулĕк мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ кăшт чакнă виçĕмçулхинчен). Вăтам ĕç укçи –3 пин тенкĕ. Ку тĕлĕшпе парăм çук. Кадрсен ыйтăвĕпе проблема çук. Выльăх апачĕ çителĕклĕ.

**"Востокра"** хĕле тĕплĕн хатĕрленни куç кĕретех. Выльăх апачĕ пирки пуç ыратмалла мар кунта. Фермăсенче тирпейлĕ, мĕн пур система йĕркеллĕ ĕçлет. Ĕç укçин парăмĕ çук, анчах вăл пурăнмалли чи пĕчĕк минимум чухлĕ мар-ха (2151 тенкĕ). Аш, сĕт туса илессипе виçĕмçулхинчен кăшт чакнă çитменлĕхе те кăçал пĕтерессе шанас килет.

**"Хлебороб"**. Иртнĕ çулхи декабрьтен пуçласа асăннă хуçалăхăн фермисене "Волга" хуçалăх арендăна илнĕ. Çак кунсенче сĕте кунта чи пысăк пахалăхпа сутма пуçланă. Кадрсен проблеми çук. Выльăх апачĕ çителĕклĕ. Вăтам ĕç укçи –3500 тенкĕ. Хальхи вăхăтра ĕçшĕн тӳлемелли положение хатĕрлеçĕ. Çак кунсенче сыснасене типĕлле тăрантарма пуçлама майсем тупнă.

**Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче** производство кăтартăвĕсем виçĕмçулхинчен чакни хăех кунта лару-тăру çăмăл маррине кăтартса парать. Апла пулсан ăна лайăхлатассишĕн çанă тавăрса ĕçлемелле.

**"Лидерта"** выльăх-чĕрлĕх пăхакансене пĕр уйăх кая юлса тӳлеççĕ ĕç укçине. Пĕтĕмĕшле кăтартусем япăх мар. Сĕт туса илесси чакни вара мухтанмалли япала мар.

**"Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра** выльăх апатне çителĕклĕ хатĕрленĕ. Тырă фуражне вара туянма палăртаççĕ. Икĕ сысна пăхакан кирлĕ тата хуçалăхра. Ĕç укçине 2 уйăх кая юлса тӳлеççĕ. Вăтам ĕç укçи пысăках мар: 2110 тенкĕ. Ăмăрту условийĕсемпе килĕшӳллĕн вĕсене преми парса хавхалантарнă. Куллен кунта кашни ĕнерен 13 килограмм сĕт сăваççĕ. Иртнĕ çул кунта 4 пинлĕ чикĕрен иртрĕç.

**"Рассветра"** выльăх апачĕ çителĕклĕ тесе шутлаççĕ. Хуçалăхра тĕп зоотехник çукки, Мăн Тутаркас ферминче ĕне сăвакансем çителĕксĕр пулни ура хурать. Вомпăкассинче çĕнĕ технологи çине куçма фермăна реконструкци тăвас ĕçсем вĕçленнĕпе пĕрех. Вăтам ĕç укçи – 3 пин тенкĕ. Хуçалăхра пăрусем талăкра 600 грамм ӳт хушаççĕ. Çак ĕçре нумай çул вăй хуракан В.В. Варюхина уйрăмах ырăпа асăнас килет.

**"Агроурожайра"** ĕç укçине пĕр уйăхшăн паман. Сысна пăхакансем 11ĕн. Кадрсем, выльăх апачĕ çителĕклĕ. Санитари кунĕсем тăтăш иртеççĕ. Выльăх пăхакансен йăла пӳлĕмĕсене реконструкциленĕ, душевой туса панă.

**Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăхри** фермăсенчи лару-тăру тивĕçтермест. Витесенче тирпейсĕр, тислĕке тăтăш кăлармаççĕ. Санитари кунĕсене кунта йĕркелемеççĕ. Ăна тасатмалли система час-час юсавран тухать. Çурлатринчи ĕне фермин заведующийĕ çукки те хуçалăхра ĕç, кану условийĕсене лайăхлатмалли пирки калать. Ĕç укçине вăхăтра тӳлемеççĕ. Выльăх апатĕнче концентрат пач та çук. Кĕскен каласан, йĕрке тăвассипе тимлемелле-ха кунта.

**"Чемеево"** хуçалăхра та кадрсен ыйтăвне татса парассипе ĕçлемелле-ха. Ĕне фермин заведующийĕ, осеменатор çук. Çавăнпа та вĕсен тивĕçĕсене аслă зоотехник пурнăçласа пырать. Кашни ĕнерен кунта иртнĕ çул виçĕмçулхинчен 14 процент чухлĕ нумайрах – 3510 килограмм сĕт суса илнĕ. Вăтам ĕç укçи вара пурăнмалли чи пĕчĕк минимумран сахал: 2228 тенкĕ. Санитари кунĕсем иртеççĕ. Кашни кварталта ĕçе пĕтĕмлетесси йăлана кĕнĕ, анчах та ăмăрту условийĕсене çирĕплетмен.

**-Татьяна Александровна, лару-тăрăва пĕтĕмĕшле мĕнле хак панă пулăттăр?**

-Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнчи ĕçсене, ыттисемпе танлаштарсан, "Оринино", "Герой", "Ударник", Ильич ячĕпе хисепленекен, "Восток", хуçалăхсенче уйрăмах лайăх йĕркеленĕ. Хуçалăх ертӳçисене вара пурне те асăннă отрасль çине яваплăрах пăхма, час-час фермăсенче пулма сĕнес килет. Сĕте ытларах туса илме май паракан мĕн пур çул-йĕрпе усă курмалла паян. Сĕт хуçалăха кулленех чĕрĕ укçа илсе килнĕ чух, çитменнине патшалăх та ку тĕлĕшпе пулăшу панă чух, вырăнсенче хăйсенчен килнине йăлтах тумалла. Кашни ĕнерен 3500 килограмран кая мар сĕт суса илнĕ хуçалăхсене патшалăх уйăракан укçана хамăрăн тăрăшусăрлăха пула çухатни килĕшӳллĕ пулмĕ.

Хуçалăхсенче паян татса памалли тепĕр ыйту вăл – выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче кирлĕ специалистсем çителĕксĕрри. Кадрсен ыйтăвне татса памасăр производствăра пысăк çитĕнӳсем тума хĕнрех пулĕ.

Пĕтĕмĕшле вара хуçалăхсенчи лару-тăру, кун умĕн иртнĕ выльăх-чĕрлĕх кунĕнчипе танлаштарсан, лайăхланни палăрать. Апла пулсан çак ĕçе малалла та туса пымалла.

**-Тавах, Татьяна Александровна, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

## Шкул çулне çитмен ачапăча учрежденийĕсенче

# Яланах янăратăр «Шăнкăрав»

Кашни ачанах чунĕнче ырă ĕçсемпе палăрас туртăм, ăмăртса мала тухма чĕнекен вăй-хал пур. Вĕсене вăхăтра асăрхама пĕлмелле, çиеле тухма, аталанма майсем туса памалла. Çав туртăмпа вăй-хала хускатма пулăшакан вăй вăл – вăйăсем. Ача кашни вăйăран ăс, чеелĕх, коллективлăх туйăмĕ, çаврăнăçулăх, тавçăрулăх, çирĕплĕх пухать. Вăйăсенчен пуçтарăннă ăсталăхпа пурнăçра куллен усă курать.

Шăпах çак тĕллевсемпе ирттерчĕç те ĕнтĕ Çĕнĕ çул умĕнхи кунсенче Москакассинчи «Шăнкăрав» ача сачĕн территорийĕнче хĕллехи вăйăсене. Хаваслă шав нумай çынна пухрĕ. Ачасемпе пĕрле вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те савăнсах вылярĕç. «Хĕллехи сивĕре ватти те яшланать», теççĕ. Анчах та сивĕ хăваламарĕ вĕсене хальхинче, хăйсем юр тăрăх «шайбăна» хăваларĕç, тĕрлĕ вăйăсенче вăй виçрĕç. Командăсене ертсе пыракан Вупăр карчăкпа Алена пике никама та пытанса юлма памарĕç, «курма кăна» килнисем те маттурлăхĕсене кăтартрĕç.

Вупăр карчăк сиенлĕ ĕçĕсемпе «тарăхтараканччĕ». Ыррине усалпа нихăçан та çĕнтерме çуккине ăнланчĕ-ши, «Шăнкăрав» шăпăрланĕсене кăмăлларĕ-ши е Алена пике кăмăлĕ çавăрчĕ-ши ăна? Ку хутĕнче вăл хаярлăхĕ çинчен мансах кайрĕ. Тен, сывлăхран хакли нимĕн те çуккине ăнланса илчĕ. Вăл хăйĕн хастарлăхне, тавçăрулăхне, вăйне командăна çĕнтерӳсем патне çывхартма ячĕ. Анчах Алена пике команди те питĕ хастар пулчĕ, парăнмарĕ. Çапла вара вăйăсене хутшăннисене пурне те саламларĕç, чысларĕç.

Вăйăсене йĕркелеме, асра хăварма Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М.М. Пушкин тата Н.Л. Царев предприниматель нумай тăрăшрĕç. Вĕсем уяв программине малашне татах та пуянлатма ача садне кĕлеткене çирĕплетмелли тĕрлĕ хатĕрсем тата ытти спорт хатĕрĕсем парнелерĕç. Вĕсем кӳнĕ парне «Шăнкăрав» малалла тата хăватлăрах янрасса шантарать.

**Е. ЗАХАРОВА,**
**Москакассинчи вăтам шкулта 11-мĕш класра вĕренекен.**